4173
41-298

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

# ПĔЧĔКÇĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ



ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар ■ 1941

АРКАДИЙ ЭСХЕЛЬ

# П Ĕ Ч Ĕ К Ç Ĕ СТРОИТЕЛЬСЕМ

ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

ЧАВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР 1941

Редактор Н. Ильбеков.

Сдано в производство 1-IX-41 г. Подписано к печати 17-IX-41 г.
НТ-6618. Об'ем 1,25 п. л. Тир. 2000 экз. Заказ № 1391

г. Канаш, тип. Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР.

## КРЕМЛЬ

Васкавлă поезд кĕрлесе
Çитсессĕн Мускава,
Çулра ĕшеннĕ чĕресем
Хавассăн хускалаç.

Сан кăкăрна вĕри тулать,
Хумхатакан вĕри.
Сан умăнта — аслă хула,
Тăван çĕршыв чĕри.

Пин тĕрлĕ сасăпа кĕрлет,
Юрлать хăй юррине.
Эс пĕтĕм халăхпа пĕрле
Чăматăн çĕр айне

Алра сан пĕчĕк чемодан,
Эс килнĕ ялтанах.
Ниçта лармасăр чи малтан
Ларатăн метрона.

Çиçсе тăрать сан умăнта
Тĕлĕнмелле тĕнче.
Çитсе анатăн самантах
Свердлов площадĕнче.

Кунта эс каймăн аташса,
Сана, мĕншĕн тесен,
Кĕтсе илеççĕ ялкăшса
Кремль çăлтăрĕсем.

Татах, татах сан кăкăрна
Килет-çке вĕри хум
Вĕсем вĕт тăчĕç сан умна
Паян малтанхи хут.

Вырнаçиччен пĕр-пĕр çĕре
Çак аслă Мускавра,
Эс хумханса утса çӳрен
Кремль йĕри-тавра.







Утатăн эс, сан чĕрере —
Шухăшпала телей.
Мухтавлă Хĕрлĕ Площадре
Куратăн—Мавзолей.



Унта Ильич канса выртать,
Улăп йышши этем.
Тулта, хурал пек, шăпăртах
Тăраççĕ чăрăшсем.

Пыратăн эс, чăваш ачи,
Шутлатăн эс тăрса:
— Эп кам кулли пулаттăм-ши,
Ильич пулман пулсан?



Пулсассăн та пулаттăм тен
Суккăр кĕслеçĕ çеç...
Анчах та халĕ ав çӳлтен
Çут çăлтăрсем çиçеç.

Пăхатăн эс Кремль çине,
Çут çăлтăрсем çине.
Вĕсен çути пур тĕнчене
Кĕрешĕве чĕнет.



Пăхатăн эс Кремль çине...
Унти пĕр пӳлĕмре
Çулпуç тăвать халăх ĕçне,
Тусĕсемпе пĕрле.

Пыраççĕ аслă Кремле
Çĕршыв геройĕсем,
Çулпуç итлет тĕлĕнмелле
Юмах пек хыпарсем.



Вăл питĕ ăшшăн кăмăллать
Кашни ыр хыпара.
Унтан геройсене каллах
Заданисем парать.

## ÇЫРУ

Командир пичче, халь эпĕ
Пĕчĕкçĕ ача.
Вĕренме шкула çÿретĕп
Кăçалтан анчах.



Эс ăçтан пĕлме пултарăн
Ман пек чĕрĕпе.
Сан çинчен ак эп вуларăм
Тĕпĕ-йĕрĕпех.

Тăшмана эс шар кăтартнă
Бомба вучĕпе.
Çĕршывпа мана сыхланă
Тĕрĕс те чипер.

Эп шкула куллен çÿренĕ,
Ÿркенме пăхман.
Ăнсăртран çеç пырса лекнĕ
Сана çав тăхлан.



Эсĕ халь выртан пуль акă
Шур палатăра.
Эп çыру çырап. Вула та
Вăй ил хăвăртрах.

Эс сывал, ман лейтенантăм,
Эсĕ ачаш мар.
Эп ÿссен санпа пĕр танăн
Тăрăп юнашар.

# ПĔЧĔКÇĔ СТРОИТЕЛЬСЕМ



Кайăксем çӳлте вĕçеççĕ,
Кулкалать ав, çуттĕнче.
Ачасем хĕрсе ĕçлеççĕ
Шкулăн мастерскойĕнче.

Каскалаççĕ те чутлаççĕ,
Пăралаççĕ, шăтараççĕ,
Саваласçĕ те хăйраççĕ,—
Вĕсемпе халь пыр, калаç!
Вĕри ĕç нихçан та каççăр
Ват инструктор хăтăрмасăр,
Лăпланмасть.



Мишша тимĕре касать,
Коля винтă хытарать.
Ак вĕсен пулать часах
Çутă бронĕллĕ карап.
Мишша та маттур ăстаçă,
Коля та маттур ăстаçă,
Иккĕш те вĕсем васкаççĕ:
—Ыранах çав карапа
Çурçĕрелле ярăпăр!

Пысăк мар-ха пирĕн Гера,
Çулĕ вунпĕрте пырать.
Анчах паллă „инженер“ вăл,
Темĕскер те ăсталать.



Акă ансăр çулпала,
Савмалла та кулмалла,
Чупать унăн паровозĕ
Хăштин-хăштин хашкаса.
Ăçтан тӳсĕн ырламасăр
Кунашкал паровоза!..

Шухăшлатăн, тĕлĕнен:
Мĕнле-ха çав ăптăр—каптăр,
Тĕрлĕ ванчăк тимĕртен
Игорь тунă çĕнĕ трактор?
Трактор тунă та унтан
Тума тытăннă вăл танк.



Тулта кайăксем вĕçеççĕ,
Шав виçеççĕ тĕнчене.
Ак кунта хĕрсех ĕçлеççĕ
Тепĕр икĕ „инженер“.

Шур пиртен çунат караççĕ,
Мыскарасăр, çăмăлах,
Куçукпа Ваççук тăваççĕ
Виç моторлă самолет.



Сăртсем урлă, шывсем урлă,
Çил-çунатлă, виç моторлă,
Кайĕ вăл вĕçе—вĕçе,
Курăнми инçе—инçе.

Ачасем ĕçре васкаççĕ,
Тар тухать хăйра—хăйра.
Çирĕм пĕр тĕрлĕ ăстаçă
Вĕренет мастерскойра.



Çирĕм пĕр хăюллă маçтăр
Ну, мĕскер кăна тумаççĕ!
Кунта çуккă мĕн кăна!
Мотоцикл, çилçуна,
Молотилка, лобогрейка,
Ик комбайн, виçĕ жнейка,
Винтовкийĕ, пулемечĕ,—
Вĕсем пурте пĕчĕкçеççĕ.
Е ытах пĕлес килсен,
Вĕсем пурте—модельсем.
Пурте çĕнĕ, пит аван,
Акă тупă, акă танк,
Тата инçе мар унтан
Ларать çутă телевизор,—





Килсе пăхăр, килсе виçĕр,
Пурте унăн тĕрĕсех.

Ав, унта тата ракета,
Ак ăна Куçук çĕклет те
Уйăх çинелле — тӳрех! —
Ну, ачсемĕр, вирлĕнрех!



Ĕмĕт çиçĕнет тӳп - тӳррĕн
Коммунизм патнелле.
Пурнăçра пурне те пирĕн
Çитмелле те пĕлмелле.

Кайăксем çӳлте вĕçеççĕ,
Юлас марччĕ вĕсенчен.
Ачасем хĕрсе ĕçлеççĕ
Шкулăн мастерскойĕнче.



Мĕнпурнех тăваç пĕлсе
Пĕчĕкçĕ строительсем:

Каскалаççĕ те чутлаççĕ,
Пăралаççĕ, шăтараççĕ,
Савалаççĕ те хăйраççĕ,—
Вĕсемпе халь пыр, калаç!
Вĕри ĕç нихçан та каççăр,
Ват инструктор хăтăрмасăр,
Лăпланмасть.

---

## СУНАРÇĂ ПАТĔНЧЕ

Елиххан мучи ялта
Ĕмĕрхи сунарçă.
Хăй килне вăл вăрмантан
Тем те пĕр куçарчĕ.



Тĕнчере пур миçе пин
Тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк.
Елихханăн серепи,
Пĕр лексессĕн, хĕсĕк.

Кашни тĕрлĕ кайăка
Сăнаса пăхмашкăн
Амантмасăр, лайăхах,
Чĕрĕлле тытасшăн.

Çапла унăн килĕнче
(Ман килпе вăл хирĕç)
Чĕрӳ сикĕ тĕлĕнсе,
Чăн-чăнах зверинец.
Хăй кулса вăл хăш чухне:
— Çук-ха,—тет,—леш слонĕ!..
Туртăнать экскурсине
Кунта пур районĕ.



Уйрăмах-çке мучине
Юрататъ шкул çарĕ.
Кунта зоологине
Вĕренме начар-и?

Тĕрлĕ представитĕле
(Зоологи тăрăх)
Эс куратăн чĕрĕлле,—
Ăçта курăн урăх?

— Урăх Мускаврa кăна,—
Тет мучи мăнаçлăн.
Кăтартма вăл тытăнать,
Ăçта мĕн вырнаçнă.



Акă тимĕр читлĕхре
Асав шăллă кашкăр.
Урăхла—тукмак хӳре,
Теççĕ ятламашкăн.

Кашкăр шăлĕпе шаккать
Унăн-кунăн пăхкалать.

Кунта акă чăн упа,
„Пыл ăсти“ ун ячĕ.
Ачасем те ушкăнпа
Ун умне пыраççĕ.

Астараççĕ шăхăрса
Çирĕм тĕрлĕ саслăн.
Сахăр е конфет парсан
Ташлама хавас вăл.

Малалла ак тилĕ тус
Çутă ылттăн тирлĕ.
Унтан кайрĕ хура юс,—
Унтан тĕрлĕ чĕрлĕх.



Таçта илтĕнет шăк-шак,
Малалла иртетпĕр:
Туратсем çинче пакша
Мăйăр шĕкĕлчет мĕн.

Калăн, тунă пружинран,
Вылянать шăмшакĕ,—
Ку сикет пирĕн умран
Чăрсăр хир кушакĕ.

Унтан акă пуçланать
Вĕçен кайăк пайĕ,
Ман чĕлхе те çыхланать,—
Миçе тĕрлĕ кайăк!

Эп нумайёшне кунта
Ятне те калаймăп.
— Мучи, килсем, ăнлантар,
Çакă мĕнле кайăк?
— Ку пулать юман сăмса,
Çимĕçĕ ун—шĕкĕ,—
Ответлет вăл савăнса.
Кайăксен патши пек.



Елиххан мучин чăнах
Пит пуян зверинец.
Каласа пама сăмах
Эпĕ çитерейменп.



Ытах, пит курас килсен,
Пирĕн яла пырăр.
Ман мучи патне кĕрсе,
Хăвăр куçпа курăр.

## УПА ÇУРИ



Пирĕн кил çуртра чипер çеç
Пурăнать упа çури,
Елиххан мучи сунарçă
Парнеленĕскер юри.

Вăл часах алла вĕренчĕ,
Ун, хăйне кура, ăс пур.
Пăрăнмасть вăл пĕр ĕçрен те,
Хăйне май ĕçлет маттур.

Сахăрпа кăшт илĕртетĕн;
Пыл, канфет та начар мар.
Вăл чипер ларан пӳрте те
Вара хатĕр куçарма.

Ирхине пӳртрен тухсассăн:
— Мишка, вут татма! — тесен,
Вăл утса пырать хавассăн,
Пуртă, пăчăкă илсе.



Паяна канфет çимелĕх,
Шарламасăр, шăпăртах,
Питĕ кăмăллăн та меллĕн
Ларса пăчăкă туртать.

Урисем ан тив ун урлă,
Урлинче кахаллăх çук.
Уйрăмах ĕçлет маттур вăл
Пĕрене-мĕн туртнă чух.

Вăл çапла пĕр хĕтĕртмесĕр
Кӳршĕсен кив вĕрлĕкне
Пĕтĕмпех туртса пĕтерчĕ,

Туртрĕ хамăр картишне.
Мĕн тăвайăн? Чĕмсĕр выльăх.
Çилленсен çеç мĕкĕрет.
Хирĕçес унпа,—вăл вăйлă,
Çĕнтереймĕн пур-пĕрех.

Çăмĕсем хура та вăрăм,
Питĕ çăмламас упа.
Хĕл çитсен çемçе юр тăрăх
Пирĕнпе пĕрле чупать.

Юртан улăп йăвалатпăр,
Виç ытамлă кĕреш пек.
Вара пирĕн икĕ паттăр
Тытăнаççĕ кĕрешме.

Кĕрешеççĕ, тăрмăшаççĕ,
Çырмана çеç йăванаççĕ.
Упи ав чăн тĕпĕнче
Выртать питĕ тĕлĕнсе.





## УПА ÇУРИ МЫСКАРИ



Эпир кун евĕр мыскара
Курманччĕ халиччен.
Упа çури пĕрре вара
Култарчĕ ӳкиччен.

Вырта-вырта вăл каçсерен
Тӳлек сарайĕнче,
Шутланă пуль:—пĕр ĕçсĕрех
Пурнатăп канлĕн çеç.

Çак вăхăтра кĕтмен çĕртен,
Пахча алăкĕнчен
Кĕрсе тăрать темле этем,
Хăй чĕмсĕр те пĕччен.

Çын малалла иртме хăрать,
Упа ăна сăнать.
Сăнать-сăнать те хăлхаран
Пĕрех çапать ăна.

Этем хăлхи, чан çапнă пек,
Йăн-ян тăвать кăна.
Ăна ман Мишкă çаплипех
Илет ак тыткăна.

Ирпе тухатпăр картишне,
Куратпăр мыскара:
Упа, кăларнă чĕлхине,
Этем çинче ларать.

Чĕлхи вылять, каласшăн тем,
Каласшăн хăть пăртак.

Ун айӗнчи хайхи этем
Шалт чунсӑр пек, выртать.

Ҫак ҫын вӑл пулнӑ таврари
Пит ирсӗр вӑр-хурах...

Пирӗн килти упа ҫурин
Уссийӗ кӑшт пурах.

Эпир кун евӗр мыскара
Курманччӗ халиччен.
Упа ҫури ҫапла вара
Култарчӗ пӗринче.



## ЛАША ЁРЁХНИ ÇИНЧЕН

Пĕринче мана атте,
(Ун чухне эп тăххăртаччĕ),
Тилхепе тыттарчĕ те
Хăй хапха уçма уттарчĕ.



Лаши пирĕн шухăччĕ,
Каласассăн, шĕл-кăвар.
Эп çавна пĕлмен те мар...
Анчах тем мур тупăнчĕ.

Мĕн амакĕ? Ăнланассăм
Ман пулмарĕ ун чухне.
Кил хапхийĕ уçăлсассăн
Туртрăм кăшт тилхепене.

Кăшт кăна вĕт. Анчах утăм
Тапса сикрĕ вут пекех.
Аттен сухалне çеç куртăм,
Утăм кайрĕ вара урнăн
Урам тăрăх сиккипе.

Йăмрасем иртсе юлаççĕ,
Пурте пĕр йăмра пулса.
Кантăксем юхса юлаççĕ
Çутă шыв юххи пулса.

Тĕнĕле ури лекет
Шак та шак.
Тата хыттăн ĕрĕхет
Ман лаша.



Çиçĕмпе вăл тавлашать,
Анчах акă тăкăрлăк.
Унта чăмрĕ ман лаша
Кĕç каяттăм пуçхĕрлĕ.

Пуçхĕрлĕ ўкмен пулсан та
Инкек пулчĕ кĕтесре.
Кăшкăрайрĕ Мохов Сантăр

Пĕр сăмах çеç:—ну, эсрел!
Ун картийĕ вирлĕн çеç
Урам урлă сирпĕнчĕ.
Тухрăм вăрăм урама...
Çук паян ку ыра мар.
Урам тăрăх вăркăнса
Пынă чух,
Тĕк çеç пулчĕç харăсах
Икĕ чăх.
Мур лашамçăм тен юри-ши
Ашкăнать?!...
Пулчĕ ав сысна çури те
Аш кăна.
Сывлăшсăр çапла эп туххăм
Вăркăнса ял витĕр тухрăм.
Хамăн икĕ хăлхара
Çил ытла та тулхăрать.
Ӳтĕм-пĕвĕм шăнса хытнă;
Икĕ куçăм умĕнче,
Пăтранса куçать тĕнче.
Хам ухмах пек ярса тытнă
Урапа уратинчен.
Ăçта çитнĕ пулăттăм
Кăшт та чухлаймастăп.
Тен, çак хальхи кулă та
Ĕмĕр пулаймасчĕ?!.
Ун чух мĕн ман кулăшĕ—
Учĕ те ут мар та.
Пĕр канав çеç пулăшрĕ,
Эп кĕрсе те лартăм.
Çакăншăн атте çапах та
Хĕртме тăнăччĕ ун чух.
Хам вĕри куççуль çăтатăп,—
—Ан тив,—тетĕп,—айăп çук.
Пĕр анне çеç пулчĕ маншăн,
Вăл каларĕ: — çитĕ, ашшĕ,
Ӳлĕм шухă лашана
Шанса ан пар ачана.







## АЧАСЕМПЕ ТИХАСЕМ



Тихасем курас шутпа-и,
Е ахаль кăна çул майăн,
Петя пулчĕ пĕринче
Хăй колхозĕн витинче.

Аслă конюх Асламасов
Пĕчĕкçĕ пионера
Кĕтсе илчĕ шарламасăр,
Темĕнле кăшт мăннăнрах.

Анчах Петя çухалмарĕ
Аслă конюх умĕнче.
— Мухтанмашкăн пит ир
мар-и?—
Шухăшларĕ ăшĕнче.

Унтан Петя, пуçлăх тейĕн,
Пăхрĕ шалалла кĕрсе.
Кунта курчĕ вăл: кичемĕн
Тĕлĕреççĕ тихасем.

Куçĕсем вĕсен тĕтреллĕ,
Усăк мĕскĕн пуçĕсем.
Урамра тĕпĕртетмеллĕх
Вăй та çук пек халь вĕсен.



Çăмĕсем шалт вараланчăк,
Тасатмаççĕ вĕсене.
Петя çак тихасене
Курчĕ те пит пăшăрханчĕ.

Унтан аслă конюха
Вăл каларĕ:—ну, пăх-ха,
Эс, юлташăм Асламасов,
Мăн çынсем пек каласассăн,
Ĕç тухать вĕт япăхрах.

Калаçу нумай пулмарĕ,
Кану кунĕ çитсенех
Килсе кĕчĕ витене
Ачасенĕн шавлă çарĕ:
Шăп вунçичĕ пионер.
Пычĕç хăйсем тĕллĕн çеç,—
Тихасем шалт тĕлĕнчĕç.



Ĕç пуçланчĕ кĕрлесе,
Пăх та кур çеç!
Хăшĕ тытрĕ кĕреçе,
Хăшĕ — хыркăç.
Хăшĕ — щеткă, хăшĕ — хачă,
Хăшĕ — шурă алшăлли.
Кашниннех ĕçлет алли.
Хыркăçлаççĕ, щеткăлаççĕ,
Якатаççĕ, çутатаççĕ,
Ачашлаççĕ те лăпкаççĕ,
Алшăллипеле шăлаççĕ
Тихасен куçĕсене.
Хачăпа касса юсаççĕ
Кăтрашка çилхисене.



Петя пирĕн тухтăр пек,
Санитари пултăр, тет.
Вăл кăрчанкă сиплеме
Тупнă витĕмлĕ эмел.

Нумаях та кун иртмерĕ,
Ĕç юсанчĕ пĕтĕмпех.
Килсе кĕчĕ çĕн тирпейлĕх
Тихасен ăш витине.

Юпахсем пуçне çĕклерĕç,
Йăл çуталчĕç куçĕсем.
Картишне тухсан чипер çеç
Ташласа çӳреç вĕсем.



Халь кашниййĕн куçĕнче
Йăлтăрать хавас тĕнче.



Аслă конюх çиленмерĕ,
Вăл пăхать кулкаласа.
Çапла пирĕн пионери
Усă кӳчĕ колхоза.

Усă кӳчĕ те ăс илчĕ
Ĕçлеме те пурăнма.
Ватă конюх Карп Васçилчă
Кашни вырсарни кунах,
Витере ĕçленĕ хыççăн,
Ачасене ăйăрпа,
Çуйăхса юрла-юрла,
Çилçуна çинчи пек çиçнĕн,
Чуптарать халь катаччи.
Хыçалта хаяр та вичкĕн
Шăхăрса юлать ав çил.

---

Чувашская
Книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР

Цена 90 коп.

А. ЭСХЕЛЬ

МАЛЕНЬКИЕ СТРОИТЕЛИ

Госиздат ЧАССР
1941